27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 июнь 16 эрнекун 118(4613) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Силос ҫителӗклӗ хатӗрлер

Колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхе малалла та ӑнӑҫлӑ ӗрчетсе пырас ӗҫре выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрлени татса парать. Выльӑх апачӗн базине ӳстерес, тӑк выльӑх ҫителӗклӗ таран апат хатӗрлесе хӑварас ӗҫре силос пысӑк вырӑн йышӑнать. Ҫавӑнпа та нумай колхозсем халех силос хывма тытӑннӑ. Республикӑра малта пыракан колхозсем ҫапла тӑваҫҫӗ. Ишлей районӗнчи «Красное Сормово», «Пионер» колхозсем [illegible] тонна силос хывнӑ [illegible] «Ударник», «Восток», Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсенче те силос хывас ӗҫ [illegible] Вӑрмар тата ытти районсенче [illegible]

Иртнӗ ҫул чылай колхозсем выльӑх апачӗ [illegible] Ҫӗмӗрле, Ишлей районӗнчи «Малалла» колхозра (председателӗ Степанов юлташ) [illegible] «Осоавиахим» колхоз [illegible]

Кӑҫал пӗтӗм республикӑра колхозсен 130.000 тонна силос хывмалла. [illegible]

Нумай пулмасть Ивановӑ облаҫӗнчи Шуя районӗнчи комсомолецсен [illegible] Чӑваш АССР Ҫӗр ӗҫ Халӑх Комиссариачӗ [illegible]

Вӑрмар районӗнчи комсомолецсем [illegible] ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗ [illegible] 60 [illegible] 18 [illegible]

Силос сӗткенлӗ апатсен шутӗнче тӑрать. [illegible] 10—12 процент [illegible]

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ [illegible]

Силос сывласа [illegible] Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ [illegible] 10-шар килограмм [illegible]

[illegible]

Чӑваш АССР Ҫӗр ӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе ВКП(б) Обкомӗн ялхуҫалӑх отделӗ тӑратнӑ тӑрӑх, республикӑри Хисеп хамӗ ҫине кӗртнӗ:

65. Вӑрмар МТС-ӗ (директорӗ В. В. Петров, парторганизаци секретарӗ Д. С. Авакумов, старши механикӗ М. В. Веркунов). МТС трактор ӗҫсен суркуннехи планне 101 процент пурнӑҫланӑ, 1.200 килограмм горючи перекетленӗ.

Чи лайӑх бригадирсем: В. В. Лунин, унӑн бригади суркуннехи ӗҫсен планне 167 процент тултарса 250 килограмм горючи перекетленӗ; **И. А. Александров** — плана 147 процент тултарнӑ, 135 килограмм горючи перекетленӗ; **В. Н. Никандров** — плана 131 процент, **И. М. Макаров**—129 процент, **И. И. Иванов** — 116 процент тултарнӑ.

Чи лайӑх трактористсем: А. Никонов, А. Никитина, Н. Иванов, М. Павлов, вӗсем плана 155-шер процент тултарнӑ; **А. Афиногентова, М. Пахарева**, вӗсем плана 125—130-шар процент тултарнӑ.

66. Калинино МТС-ӗ (директорӗ А. Ф. Волков, старши механикӗ В. Ф. Рымзов). МТС трактор ӗҫсен суркуннехи планне 108 процент тултарнӑ, 880 килограмм горючи перекетленӗ.

Чи лайӑх бригадирсем: Е. И. Иванов, унӑн бригади суркуннехи ӗҫсен планне 145 процент тултарса 542 килограмм горючи перекетленӗ; **М. А. Андреев** — плана 142 процент тултарнӑ, 122 килограмм горючи перекетленӗ; **М. Г. Григорьев** — плана 108 процент тултарса (628 килограмм горючи перекетленӗ.

Чи лайӑх трактористсем: А. С. Семенова, В. И. Хмелева, М. М. Моисеева, вӗсем суркуннехи ӗҫсен планне 210 процентран пуҫласа 230 процент таран пурнӑҫланӑ, 115 килограммран пуҫласа 242 килограмм таран горючи перекетленӗ; **В. Г. Флотская, М. Е. Козлова, А. И. Илларионова, И. С. Сидоров**, вӗсем плана 200-шер процент тултарнӑ, 100 килограмран пуҫласа 180 килограмм таран горючи перекетленӗ.

67. **Ишлей МТС-ӗ** (директорӗ **Е. Г. Рязанов**, парторганизаци секретарӗ **М. П. Петров**, старши механикӗ **Н. Н. Кириллов**). МТС трактор ӗҫсен суркуннехи планне 119 процент тултарнӑ.

Чи лайӑх бригадирсем: И. Н. Елахов, унӑн бригади суркуннехи ӗҫсен планне 165 процент тултарса 100 килограмм горючи перекетленӗ; **Т. Е. Ефимов** — плана 156 процент тултарнӑ

ВЛКСМ Обкомӗнче

Комсомолӑн Вӑрмар районӗнчи малта пыракан пуҫламӗш организацийӗсем выльӑх-чӗрлӗх фермисем валли ҫителӗклӗ таран апат хатӗрлес ӗҫе пуҫарса ячӗҫ. Ҫавӑн валли вӗсем хирти армутисемпе вӗлтренсене тата йывӑҫ ҫулҫисене пухаҫҫӗ. Чупайри 7 ҫул вӗренмелли шкулти пионерсемпе шкул ачисем 45 центнер вӗлтренпе армути, 12 лав йывӑҫ ҫулҫи пухнӑ. Кив Вӑрмарти 7 ҫул вӗренмелли шкулта 30 центнер вӗлтрен тата армути пухнӑ. Буинскри пуҫламӗш шкулта вӗренекенсем 23 центнер вӗлтрен типӗтсе фермӑна леҫнӗ. Вӗсенчен сыснасене хӗлле ҫитерме куҫӑк ҫӑнӑхӗ туса хатӗрлесҫӗ.

ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗ, Вӑрмар районӗнчи пионерсемпе шкул ачисен тата колхоз ҫамрӑкӗсен пуҫарӑвне ырласа, республикӑри пур комсомол райкомӗсене те ҫак пуҫарӑва тӗплӗн сӳтсе-явма сӗнет. Обществӑллӑ выльӑхсем валли апат хатӗрлес ӗҫе комсомол организацисене активлӑн явӑҫтарас тӗлӗшпе практикӑллӑ мерӑсем йышӑнса хӑвармалла.

ВЛКСМ Обкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, райкомолсен райҫӗрӗҫ пайӗсемпе пӗрле йывӑҫ ҫулҫисемпе хирти ӳсен-тӑрансене пухмалли воскресниксем ирттермелле. Ҫак ӗҫе колхоз ҫамрӑкӗсене мобилизацилемелле, кивӗ силос шӑтӑкӗсене юсаттармалла, ҫӗнӗрен шӑтӑксем чавмалла. Унта **нашни ӗне валли 6-шар тонна, пӑрусем валли 2-шер тонна, сысна амисем валли 1,5-шер тонна, сурӑхсем валли 3-шер центнертан кая мар силос хывмалла.**

Кунсӑр пуҫне ВЛКСМ Обкомӗ комсомолӑн колхозсенчи пуҫламӗш организацийӗсене уборкӑна хатӗрленмелли инвентарьсене ҫамрӑксен вӑйӗпе тӗрӗслесе тухма хушать

Республика уйхирӗсенче

Ҫӗртме тӑвасҫӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнӗн 12-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Районри колхозсем ҫӗртме сухи тума тата тислӗк тӑкма тытӑнчӗҫ. Упири «Янмурзино» колхозра ҫӗртме тунӑ ҫӗрте кулленех 223 плуг ӗҫлет. Халӗ 60 гектар ытла сухаланӑ.

«Победа», «Свобода» колхозсенче ҫӗртме сухи тӑвас вырӑна хӗрсех тислӗк кӑларасҫӗ. «Победа» колхозра виҫӗ кун хушшинче уя 1920 лав ытла тислӗк кӑларнӑ. Ку ӗҫре уйрӑмӑнах шкул ачисемпе пионерсем тӑрӑшса ӗҫлессӗ. Акӑ, З. Петрова, К. Серафимов юлташсем кунне 25—30-шар лав тислӗк тӑкасҫӗ. Ҫавӑн пекех В. Капитонов, М. Филиппова, Н. Тихонов, Т. Баранова, А. Степанова ҫамрӑксем те тӑрӑшса ӗҫлессӗ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

1737 гектар ҫум ҫумланӑ

ЭЛӖК, июнӗн 15-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Районри колхозсем калчасене ҫумкурӑкӗнчен тасатас тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлессӗ. Халӗ пӗтӗмпе 1.737 гектар ҫинчи калчасене ҫумкурӑкӗнчен тасатнӑ. Вӑл шутран «Доброволец» колхоз 182 гектар, «Красное Сормово» — 65 гектар, «IX Съезд ВЛКСМ» — 96 гектар, Калинин ячӗпе тӑракан колхоз 170 гектар ҫумланӑ. Сталин ячӗпе тӑракан колхоз ҫум ҫумлас тӗлӗшпе кӑтартуллӑн ӗҫлет. Вӑл пур участоксене те ҫумкурӑкӗнчен тасатнӑ. Халӗ колхозниксем ҫӗртме тумалли участок ҫине тислӗк тӑкасҫӗ. Паянхи куна 1.000 лав тислӗк тӑкнӑ.

Х. ЛИСИН.

Танксемпе самолетсем тума

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июнӗн 14-мӗшӗ. **(Телефонпа).** «Красный Октябрь» колхозра колхозниксемпе колхозницӑсем тата колхоз активӗ Хӗрлӗ Ҫар валли боевой самолетсем тума укҫа-тенкӗ пухма тытӑнчӗҫ. Колхоз председателӗ Т. Акчурин юлташ хӑй 5.000 тенкӗ, А. Григорьевпа И. Медведев колхозниксем 1000-шер тенкӗ парасҫӗ. Ытти колхозниксем хушшинче те ҫак ӗҫ хӗрӳллӗн сарӑлса пырать.

Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче

** Парти курсӗнче вӗренекенсем Хӗрлӗ Ҫар валли боевой техника тума 2.540 тенкӗ укҫан тата 6.500 тенкӗлӗх облигацисем панӑ.

** Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Ӗҫ резервӗсен управленийӗн сотрудникӗ, Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗ В. Алексеев юлташ Хӗрлӗ Ҫар валли самолетсемпе танксем тума пӗр уйӑхри ӗҫ укҫине—500 тенкӗ панӑ.

** Чӑвашмаслопромра ӗҫлекенсем Хӗрлӗ Ҫар валли боевой техника тума 7 пин тенке яхӑн пухнӑ. Работниксенчен сурри ытла икӗ уйӑхри ӗҫ укҫи чухлӗ панӑ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

М. Н. Голанцев юлташа Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Ҫулйӗр Управленин Начальникӗ пулма лартасси ҫинчен

Максим Никитич **Голанцев** юлташа Чӑваш АССР-ӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫумӗнчи Ҫулйӗр Управленин Начальникӗ пулма лартас.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули. 1944 ҫулхи июнӗн 15-мӗшӗ.

Фашистла нимӗҫ захватчикӗсем тата вӗсемпе пӗр каварлисем тунӑ тискер ӗҫсене тата вӗсем СССР Союзӗнчи граждӑнсене, колхозсене, обществӑллӑ организацисене, государство предприятийӗсемпе учрежденийӗсене сиен кӳнине тӗпчесе палӑртакан Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси пӗлтернинчен

Нимӗҫсемпе румын захватчикӗсем Одесса хулинче тата Одесса облаҫӗнчи районсенче тунӑ тискер ӗҫсем

Румыни правительстви Германи валли тупӑ кӑкайӗ, нефть, тырӑ, выльӑх-чӗрлӗх тата ыттисене те тӑратнӑшӑн Гитлер правительстви Антонеску шайккине Бугпа Днестр хушшинчи оккупациленӗ совет территорийӗнче, халӗ Хӗрлӗ Ҫар ирӗке кӑларнӑскерте, совет ҫыннисене вӗлерсе пӗтерме ирӗк панӑ. Антонеску, ҫав территорине хӑйӗн «управленине» туса, ӑна «Румыни авалхи ҫӗрӗ» тесе пӗлтерсе, Румыни королевствин пайӗ — «Транснистри» тесе ят панӑ. Румынсем «Транснистрин» центрӗ вырӑнне нимӗҫсемпе румын захватчикӗсем 1941 ҫулхи октябрь уйӑхӗнче оккупациленӗ Одесса хулине туса хунӑ.

Румынсен «Транснистри» текен ҫӗрте, хӑйсен нимӗҫ хуҫисемпе килӗшнӗ тӑрӑх, украинецсемпе вырӑссене тата молдавансене нихӑҫан пулман пек пусмӑрласа, мӑшкӑлласа пурӑннӑ. Вӗсем украинецсемпе вырӑссен культурин авалхи хулине Одессӑна «Румыни хули» туса хума шутланӑ. Ҫавӑнпа пӗрлех Румыни захватчикӗсем пӗр чарӑнусӑр ҫаратнӑ, взяткӑсем илнӗ, Одессӑри нумай ҫуртсемпе сооруженисене ишӗлтернӗ.

Ҫав ӗҫе тӗрӗслеме ятарласа комисси тунӑ, унта СССР Верховный Совет депутачӗ А. Е. Колыбанов, И. А. Сосновский, СССР Верховный Совет депутачӗ В. Ф. Михайличенко, Украина ССР-ӗнчи Наукӑсен академийӗн членӗ Г. И. Маркелов, протоиерей В. Брага тӑрнӑ; ҫав комисси Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси представителӗ Д. И. Кудрявцев, ҫавӑн пекех тата Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комиссин ятарласа янӑ членӗ И. П. Трайнин хутшӑнса ӗҫленипе, нимӗҫсемпе румын захватчикӗсем тунӑ тискер ӗҫсене тӗрӗслесе тухса, вӗсем мирлӗ халӑха терроррласа пусмӑрлани, государство тата обществӑллӑ учрежденисемпе предприятисене, ҫавӑн пекех уйрӑм граждансене ҫаратни тата ишӗлтерни ҫинчен калакан нумай фактсене палӑртнӑ.

I. РУМЫНСЕН «УПРАВЛЕНИЙӖПЕ» «ЮСТИЦИЙӖ»

«Транснистри» «правленине» румынсен губернаторӗ Алексиану ертсе пынӑ. Губернаторствӑра 13 уезд пулнӑ, вӗсен пуҫӗнче румынсен префекчӗсем тӑнӑ. Администрациллӗ аппаратсенче Румынирен ятарласа илсе килнӗ чиновниксем ӗҫленӗ. Ҫав аппарат халӑха ҫаратмалли, спекуляци тумалли тата ҫӑмӑллӑн пуймалли аппарат пулса тӑнӑ.

Одессӑри «префектура полицин» администрациллӗ комиссарӗ Санду Габриэль, комисси допрос тунӑ чухне, ҫапла пӗлтернӗ: «Эпир, Совет Союз территорийӗн пӗр пайне йышӑнса илсе, ӑна Румыни ҫумне пӗрлештернӗ тата «Транснистри» тесе ят панӑ хыҫҫӑн, ҫав края ҫаратма тата румынлатма тытӑнтӑмӑр». Санду Габриэль румынсен администрацинче вӑрӑсем, взятка илекенсем, ҫаратуҫӑсем тӑни ҫинчен кӑтартса панӑ.

Одессӑра судӑн тӗп органӗ — хирти ҫар сучӗ пулнӑ. Тӗпчесе пӗлес ӗҫе, пурнинчен ытла, сигуранецсенче (охранкӑсенче) ирттернӗ. Тӗпчесе пӗлес ӗҫӗн тӗп меслечӗ кӗнесе асаплантарасси пулнӑ. Сигуранцӑра асап тӳснӗ кинохроника режиссерӗ Павел Крапивный румынсен асаплантармалли орудийӗсем электричество пуканӗ, хулран ҫакса вӗлересси тата ытти ҫавӑн пек майсем пулни ҫинчен каласа панӑ. «Румын салтакӗсем тӗпчеме илсе пынӑ ҫынна ятарласа тунӑ пукан ҫине ҫыхса лартнӑ. Унтан ток янӑ... Следователь сӗтел ҫинчеларакан реостата ток панӑ, вара пукан ҫинче ларакан ҫын следователе ыйту ҫине кирлӗ пек ответ памасан, ток вӑйлӑрах янӑ. Ҫынӑн шӑмшакӗ чӗтреме пуҫланӑ, куҫ шӑрҫисем сиксе тухнӑ».

Нумай чухне тата ҫакӑн пек тунӑ: «Тӗпчеме илсе пынӑ ҫынна аллисене каялла ҫыхса маччаран ҫакнӑ... Ун хыҫҫӑн вара ӑна хӑвӑрттӑн ҫавӑрма пуҫланӑ. Ҫапла вара ҫакӑнса тӑракан ҫын пӗр 200 хут ҫавӑрӑнна хыҫҫӑн каялла пысӑк хӑвӑртлӑхпа ҫавӑрӑнма пуҫланӑ. Ҫав вӑхӑтра палачсем ӑна икӗ енчеп резина туясемпе хӗненӗ. Ҫакӑнса тӑракан ҫын хытӑ ҫавӑрӑннипе кӑна мар тата хӗненипе те тӑнран тухнӑ». (П. Крапивный каласа панинчен). Взяткӑсем илес тесе те ҫынсене нумай асаплантарнӑ, хӗненӗ.

II. НИМӖҪСЕМПЕ РУМЫН ПАЛАЧӖСЕМ ОДЕССА ОБЛАҪӖНЧЕ 200.000 СОВЕТ ГРАЖДАННЕ ВӖЛЕРНӖ

Одессӑна тытса илнӗ хыҫҫӑнах нимӗҫсемпе румын оккупанчӗсем совет ҫыннисене тискеррӗн вӗлерсе пӗтерме тытӑннӑ.

1941 ҫулхи октябрӗн 19-мӗшӗнче тарсклачӗсем пулнӑ ҫуртсенче совет граждӑнӗсемпе вӗсен ачисене 25.000 ҫынна ҫунтарса янӑ.

Нимӗҫсемпе румын захватчикӗсем совет ҫыннисене уйрӑмӑнах Богдановка, Доманевка тата ытти районсенче тискеррӗн асаплантарнӑ. Вӗсем ним айӑпсӑр арҫынсемпе хӗрарӑмсене тата ачасене малтан ҫав тӗри тискеррӗн асаплантарнӑ хыҫҫӑн вӗлерсе пӗтернӗ. Мирлӗ ҫынсене вӗсем ятанхи пекех концентрациллӗ лагерьсенче вӗлернӗ. Доманевка районӗнчи Богдановка совхозӗнчи лагерьте нимӗҫсемпе румын палачӗсем мирлӗ совет граждӑнӗсене 52.000 ҫынна персе пӑрахнӑ тата 2000 ҫын ытла баракӗсенче ҫунтарса янӑ.

Комисси малтанлӑха шутласа палӑртнӑ тӑрӑх, нимӗҫсемпе румын оккупанчӗсем Одессӑра тата Одесса облаҫӗнче 200.000 ҫынна вӗлерсе пӗтернӗ.

III. НИМӖҪСЕМПЕ РУМЫН ОККУПАНЧӖСЕН ВЛАҪӖСЕМ ОДЕССӐРИ КУЛЬТУРАПА ҪУТӖҪ, КОММУНАЛЛӐ ХУҪАЛӐХ УЧРЕЖДЕНИЙӖСЕНЕ ИШӖЛТЕРСЕ ПӖТЕРНӖ

Германин ҫар командованийӗ Одессӑри музейсене ҫаратнӑ, вӗсенчен чи паха япаласене турттарса кайнӑ.

Румын оккупанчӗсем, нимӗҫ оккупанчӗсен примерӗпе, культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсене ҫаратнӑ, вӗсене пӗтерсе пынӑ, хула хуҫалӑхӗнчи чи кирлӗ япаласене ишӗлтернӗ.

Румын оккупанчӗсен влаҫӗсем культурӑпа ҫутӗҫ тата наука учрежденийӗсене ҫаратма трофея комисси текен ушкӑн тунӑ, ӑна генерал Василиу ертсе пынӑ.

Румынин искусство дирекцийӗн представителӗ Цикулеску хушнипе Одессӑран Румынине 2000 рояльпе пианина турттарса кайнӑ.

Государствӑн Одессӑри консерваторийӗнчи мӗнпур инструментсене, нотӑсене, паха сӗтел-пукансене, ковёрсене, техникӑн юлашки ҫитӗнӗвӗсемпе тунӑ сасӑ ҫырмалли аппарата Румынине турттарса кайнӑ.

Румын оккупанчӗсем театрсенчи пӗтӗм костюмсене, 109 оперӑн тата 16 балетӑн нота материалӗсене, Одессӑри оперӑпа балет театрӗнчи историне музыка библиотекине илсе кайнӑ. Нимӗҫсемпе румын захватчикӗсем хӑйсем чакас умӗн театр суртне минӑсем лартса тухса ӑна ишӗлтерме хатӗрленнӗ. Хӗрлӗ Ҫар Одесса хулине хӑвӑртлӑн йышӑнса илнипе пула кӑна вӗсем хӑйсен ирсӗр ӗҫне пурнӑҫа кӗртме пултарайман.

Ятарласа тунӑ комисси тӗрӗслесе ҫакна палӑртнӑ: румынсен ӗҫлӗ ҫыннисем украинецсемпе вырӑссен тата Хӗвеланӑҫ искусствисен художествӑллӑ музейӗсенчен чи паха япалисене илсе кайнӑ. Ҫапла, губернаторствӑн искусство начальникӗ Лидио Руссу хушнипе хаклӑ сӗтел-пукансене, фарфора, Роккоко стилӗпе тунӑ хаклӑ рояле, пысӑк художниксен Куинджи, Саврасов тата ыттисен картинисене Антонеску дачине илсе кайнӑ. (1942 ҫулхи декабрӗн 4-мӗшӗнче ҫырнӑ акт, 48—53, 70, 72, 74-мӗш листсем).

Румын оккупанчӗсем ҫавӑн пекех хулари предприятисемпе учрежденисен, наука учрежденийӗсен пурлӑхӗсене ҫаратнӑ. Вӗсем Бухарест, Констанца, Яссы хулисене моторлӑ трамвайсен 108 вагонне, 25 километр тӑршшӗ трамвай ҫулне, 10 троллейбус илсе кайнӑ, хулари тата районсемпе каласмалли телефон станцине, телеграфа, радиостанцисене ишӗлтернӗ, водопроводпа канализацине ӗҫрен кӑларнӑ.

Фашистла нимӗҫ захватчикӗсем, малтанах шутласа тунӑ план тӑрӑх, Одесса хула хуҫалӑхӗн чылай пайне ишӗлтернӗ. Вӗсем архитектурӑпа художество тата истори тӗлӗшӗнчен хаклӑ 2.290 ҫурта ҫунтарса янӑ. Вӑл шутра Хӗрлӗ Ҫар ҫурчӗ, Одессӑри почтамт ҫурчӗ, коммунальнӑй банк ҫурчӗ, А. С. Пушкин ҫурчӗ, пассажирсен вокзалӗн, хула больницин, 1827 ҫулта тунӑ Сабан казармисен ҫурчӗсемпе ытти ҫуртсене пӗтернӗ. Вӑл ҫуртсем XIX-мӗш ӗмӗрти культурӑн хаклӑ памятникӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

IV. ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ОДЕССА ХУЛИНЧИ КУРОРТСЕНЕ ТАТА СЫВЛӐХА СЫХЛАС ТӖЛӖШПЕ ӖҪЛЕКЕН УЧРЕЖДЕНИСЕНЕ ИШӖЛТЕРНӖ

Нимӗҫсемпе румын захватчикӗсем Одесса хулинчи инфекционнӑй больницӑна, округри 2-мӗш номерлӗ больницӑна, сематически, психиатрически тата ачасен икӗ больницисене, ачасен поликлиникине, ачасен 7 консультацине, ачасен 55 яслине, ачасем ҫуратмалли 2 ҫурта, диспансера, люпазорине, 6 поликлиникӑпа тата туберкулезран сыватас тӗлӗшпе ӗҫлекен института, курортологи институтне тата ыттисене те ишӗлтернӗ. Вӗсем Одесса ҫывӑхӗнчи 29 санаторие ишӗлтернӗ. Сывлӑха сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен учрежденисен тата курортсен хаклӑ оборудованийӗсене, аппаратурӑна, инструментсене, эмелсене, ҫавӑн пекех инвентаре Румынине илсе кайнӑ.

V. НИМӖҪСЕМПЕ РУМЫН ЗАХВАТЧИКӖСЕМ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙӖСЕМПЕ ЯЛХУҪАЛӐХНЕ ИШӖЛТЕРНӖ ТАТА ҪАРАТНӐ

Румыни захватчикӗсем хӑйсем хуҫаланнӑ вӑхӑтра Одесса хулинчи халӑх хуҫалӑхне питех те пысӑк сиен кӳнӗ. Вӗсем заводсемпе фабрикӑсене, промыслапа кооперацине инвалидсен кооперацийӗн предприятийӗсене пӗтӗмпех ишӗлтернӗ. Техникӑпа энергетика оборудованине тата инструментсемпе материалсене Румынине турттарса кайнӑ. Вӗсем ишӗлтернӗ пысӑк предприятисем хушшинче Марти ячӗпе тӑракан судносем тӑвакан тата юсакан завод, Январьти восстани ячӗпе тӑракан, государствӑн 2-мӗш номерлӗ тир-сӑран завочӗсем, табак фабрики тата ыттисем те пур.

1944 ҫулхи апрелӗн 7—8-мӗшӗсенче нимӗҫсемпе румын захватчикӗсем Одессӑри чаплӑ тата лайӑх механизациленӗ порта ишӗлтернӗ.

1944 ҫулхи март уйӑхӗн варринче нимӗҫсем, румынсен Одессӑри «управленине» пӗтӗмӗшпех пӗтерсе, хӑйсен йӗркине туса хунӑ, ҫав йӗрке тӑрӑх вара вӗсем Одесса хулинчи пӗтӗм промышленноҫа ишӗлтерес ӗҫе вӗҫленӗ. 1944 ҫулхи апрелӗн 9-мӗшӗнче, Хӗрлӗ Ҫар Одессӑна кӗрес умӗн, нимӗҫ командованийӗ хушнипе, юлашки пысӑк предприятие — Ленин ячӗпе тӑракан консервӑсем тӑвакан завода ишӗлтернӗ.

Хӗрлӗ Ҫар хӑвӑртлӑн малалла пынипе кӑна Одессӑри нумай кварталсенче пурӑнакансене вилӗмрен ҫӑлса хӑварнӑ.

Нимӗҫсемпе румын захватчикӗсем, колхозсемпе колхозниксенчен туртса илсе, пӗр миллион та 42 пин те 13 центнер тырӑ, 45.227 лаша, 87.646 пуҫ мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем, 31.821 сысна, 64.778 сурӑх, 1.741 трактор, 4.860 ялхуҫалӑх машини тата 1.134 комбайнпа локомобиль Румынине турттарса кайнӑ. Вӗсем колхозсен 3.195 ҫуртне ишӗлтерсе пӗтернӗ.

* * *

Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси ҫакна палӑртнӑ: мирлӗ халӑха массӑллӑн ҫаратас тата вӗлерсе пӗтерес ӗҫе, промышленность предприятийӗсемпе наука учрежденийӗсене, шкулсене, больницӑсене тата курортсене ишӗлтерес ӗҫе Германин верховнӑй командованийӗ тата нимӗҫсемпе румынсен правительствисем хушнипе туса пынӑ.

Малалла Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси пӗлтерӗвӗнче ҫӳлте асӑннӑ тискер ӗҫсене тунишӗн тӳррӗмӗнех айӑплисене—нимӗҫсен генералӗсемпе офицерӗсене, ҫавӑн пекех тата Румыни влаҫӗсен представителӗсене кӑтартса панӑ.

«Вӗсен пурин те, — тенӗ пӗлтернипе, совет халӑхне хирӗҫ тунӑ преступленисемшӗн ҫирӗп ответ тытмалла».

Египет посланникӗ М. Камель Абдель Рахим бей господин Совет Союзне килни

Июнӗн 11-мӗшӗнче Мускава Египетӑн Совет Союзӗнчи Чрезвычайнӑй посланникӗ тата Полномочнӑй министрӗ М. Камель Абдель Рахим бей господин ҫитнӗ. Центральнӑй аэродромра М. Камель Абдель Рахим бей господина Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссариачӗн Протокол отделӗн Заведующийӗн ӗҫӗсене туса тӑракан Г. Н. Фомин юлташ хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ.

В. М. Молотов юлташ Египет посланникне М. Камель Абдель Рахим бей господина йышӑнни

Майӑн 14-мӗшӗнче СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ Египетӑн Совет Союзӗнчи Чрезвычайнӑй Посланникне тата Полномочнӑй Министрне М. Камель Абдель Рахим бей господина йышӑннӑ. Йышӑну М. Камель Абдель Рахим бей господин хӑйӗн верительнӑй грамотисене СССР Верховный Совет Президиумӗн Председательне парас шутпа пулса иртнӗ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮНĔН 13-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнĕн 13-мĕшĕнче Карели перешеекĕнче пирĕн çарсем çапла наступлени туса пынă, тăшманăн темиçе опорнăй пунктне туртса илнĕ, вăл шутра — СТЕКЛЯННАЯ, КЕКРОЛА, РОННУКЮЛА, ВЕХМА ЙИНЕН, СИЙРАНМЯКИ.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Июнĕн 12-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 12 самолетне персе ӳкернĕ.

ИЮНĔН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнĕн 14-мĕшĕнче Карели перешеекĕнче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе-çĕнтерсе, çаплах малалла тапăнса пынă, финсен оборонинчи вăйлă çирĕплетнĕ КУТЕРСЕЛЬКЯ, ЯРВИ, МУСТАЛОЗО, РИВАЛИМЯКИ, МЮЛЛЮМЯКИ, МАСЕЛЬКА, КОРПИКЮЛЯ ятлă опорнăй пунктсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Июнĕн 13-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 13 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ТĂШМАН АЭРОДРОМĔСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Июнĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата июнĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци тăшман аэродромĕсене йышлăн вĕçе-вĕçе кайса тапăннă. Нимĕçсен Брест, Белосток, Барановичи, Пинск, Минск, Бобруйск, Орша районĕсенчи аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Пирĕн авиаци тапăннă вăхăтра çав аэродромсем çинче нимĕçсен самолечĕсем нумай пулнă.

Бомбăсем пăрахнипе пула пушарсем нумай тухнă. Самолетсем, горючи тата боеприпас склачĕсем çуннă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Çак тапăнусенче пирĕн авиаци тăшман самолечĕсене нумай пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн 8 самолет хăйсен базисене таврăнман.

☆ ☆ ☆

Карели перешеекĕнче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман çапăçăва хăйĕн çĕнĕ вăйĕсене кĕртсе янă. Кӳлĕсем хушшинчи йышлă оборона сооруженийĕсемпе усă курса хирĕç тăнă. Пирĕн пехота тата танк чаçĕсем, артиллерипе авиаци пулăшнипе, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та финсен оборонинчи темиçе опорнăй пункта туртса илнĕ. Пурнинчен те хаярлăрах çапăçусем паян Кутерселькя тата Ярви районĕнче пулса иртнĕ. Кăç пулса килнĕ тĕлелле пирĕн çарсем çав вăйлă тĕреклетнĕ опорнăй пунктсене туртса илнĕ. Пĕр соединени виçĕ кун хушшинче тăшманăн 3.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 30 тупă, 25 миномет, 80 пулемет пĕтерсе тăкнă. Тулли мар даннăйсем тăрăх, çав соединени боецĕсем финсенчен 70 тупă, 40 миномет, 126 пулемет тата боеприпассен, апат-çимĕçпе çар пурлăхĕн 10 складне тытса илнĕ. Тытăнă нумай илнĕ.

Пирĕн авиаци тăшманăн опорнăй пункчĕсемпе çулйĕрĕсене бомбăсем пăрахапăраха штурмланă. Совет летчикĕсем чугун çул эшелонне çунтарса янă, автоколоннăна аркатса тăкнă. 6 артиллери батарейине пĕтерсе тăкнă тата 3 боеприпас складне çирĕпĕтерсе янă.

Сывăхарса пынă. Пирĕн боецсем нимĕçсен атакине сирсе янă, вĕсене хăйсен укреплениййĕсем патне ситме паман. Çапăçу хирĕнче 80 тăшман вилли выртса юлнă. Нимĕçсен 2 танкне тата çав 6 танкетка-торпедисене пурне те пĕтерсе тăкнă.

* * *

Вилейка облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр тĕлте шоссе çулĕ çине минăсем лартнă та çул айккинче засада тунă. Çак шоссепе нимĕçсен автоколонни пынă. Малти автомашина мина çине пырса кĕрсе сирпĕнсе кайсанах совет патриочĕсем винтовкăсемпе, автоматсемпе тата пулеметсемпе пеме пуçланă. Хăраса ӳкнĕ гитлеровецсем тарма пуçланă. Партизансем вăрçă хатĕрĕсем туртса пыракан 6 автомашинăна пĕтерсе тăкнă, 49 нимĕçе, вăл шутра 3 офицера, вĕлернĕ. Витебск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрядĕнчи разведчиксен ушкăнĕ пĕр пысăк яла кĕнĕ те нимĕçсем ларнă автобус çине икĕ граната вăркăнтарнă. 9 нимĕçе вĕлернĕ, 13 гитлеровеца амантнă.

* * *

Румыни çарĕнчен таракан салтаксен йышĕ ӳснĕçемĕн ӳссе пырать. Румынсен чи лайăх çарĕсенче те, сăмахран, вĕсен гвардийĕнче, таракан салтаксем йышланса пыраççĕ. Пирĕн çарсем румынсен 1-мĕш гвардейски дивизине 1944 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнче панă 2265-мĕш номерлĕ приказне тытса илнĕ. Çав приказра дивизири салтаксем нумайĕнĕ тарни тата Хĕрлĕ Çар енне куçни çинчен каланă. Чаçсемпе подразделенисен командирĕсене çав приказра дивизи командирĕ çапла кăтартса парать: «Юлашки хут çакăн çинчен асăрхаттарса калатăп: тытнă дезертирсене пурне те персе вĕлерĕмелле. Çак приказа пур салтаксене те [illegible] пĕтерĕр».

Тепĕр приказра, 1944 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕнче [illegible] 1-мĕш гвардейски [illegible] командирĕ çапла калать: [illegible]

Çав документсене [illegible]

* * *

Яссы хулинчен сурçĕртерехре нимĕçсен «Фердинанд» йышши хăй тĕллĕн сӳрекен туппи пирĕн позицисем патне сывăхарнă та пеме пуçланă. Тындерыида тата Волошин рядовойĕсем çав тупă патне систермесĕр шуса пынă та темиçе граната тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем вăркăнтарнă. «Фердинанд» чарăннă. Ун çинчи брезент çунма пуçланă. Машинăран 3 нимĕç сиксе тухнă та [illegible]

Станислав хулинчен [illegible] 4 танк тата 6 танкетка-торпеда [illegible]

Парти райкомĕн пленумĕ

КУСЛАВККА, июнĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак кунсенче кунта ВКП(б) райкомĕн черетлĕ пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум пĕр ыйту — парти ретне [illegible] Çак ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Ефимов юлташ доклад туса панă.

Партин районти организацийĕсем [illegible]

[illegible]

И. ШАРКОВ.

Уралта автомобильсем тума пуçлас умĕн

1943 çулта кĕркунне Миасра (Челябинск облаçĕ) автомобиль завочĕ тума пуçланă. 9 уйăх хушшинче автомобильсем пухакан корпуса [illegible]

[illegible] Уралта пуçласа автомобильсем туса кăларма тытăнать. (ТАСС).

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Пирĕн çураки вăхăтĕнчи ĕç

ЕЛЧĔК. Пирĕн районра пĕтĕмпе 78 комсомол организацийĕ. Вĕсенчен 52-шĕ — колхозсенчи организацисем. Комсомолецсенчен çуракинче 189 çын плугарьсем, 56 çын акакансем, 90 çын сӳрĕçсем, 24 çын тракторнисем, 19 çын яровизаторсем, 21 çын вăрлăх турттаракансем, 22 çын бригадирсем, 3 çын колхоз председателĕсем пулса ĕçлерĕç. Вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе районра 13 звено организациленĕ. Вĕсенче 42 комсомолец, 108 союзра тăман çамрăк ĕçлеççĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксем çуракинче ялан малти ретре пычĕç. Сăмахран, «Осоавиахим» колхозри комсомолецсен ялне. Унти комсомолецсем 18 вăкăрпа ĕçе вĕрентнĕ. 9 комсомолец плугарьсем пулса ĕçленĕ. Вĕсенчен нормăна тултараймани пĕрре те пулман. И. Семенов, В. Семенов, В. Скворцов комсомолецсем кунне пĕрер гектар сухалас вырăнне 1,50—1,80-шер гектар сухаланă. И. Орлов 4,5 гектар вырăнне 6,5 гектар акнă.

Колхозра вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе комсомолецсен звенине тунă. Унта пĕтĕмпе 12 çамрăк ĕçлет. Вĕсем 10 гектарлă вăрлăх участокне пăхса ӳстерме ответлăх илнĕ. Çав участок çинче гектартан 20-шер центнер сĕлĕ илессишĕн кĕрешеççĕ.

Комсомолецсем агитациллĕ-массăллă ĕçе пуçарса пыраççĕ. Çураки вăхăтĕнче вĕсем 50 хутчен каласу, 4 доклад ирттернĕ, 43 хутчен хаçат-журналсем вуласа панă. Колхозра 5 номер стена хаçачĕ, бригадăсенче 24 номер боевой листок кăларнă.

Комсомолăн Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш организацийĕ те çуракинче начар мар ĕçлерĕ. Организацинче пĕтĕмпе 17 комсомолец. Вĕсенчен 11-шĕ акнă, сӳреленĕ тата культиваторсемпе ĕçленĕ. М. Лаврентьев, В. Свеклов, А. Таманов комсомолецсем 6 гектар вырăнне 8-шер гектар акнă. В. Портнов, Н. Табаков юлташсем культиваторсемпе 3 гектар вырăнне 4,5-шер гектар çĕре кăпкалатнă. Каннă вăхăтра агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пынă.

Комсомолăн МТС-ри пуçламĕш организацийĕ пуçарнипе МТС-ри комсомолецсемпе çамрăксен тата хĕрарăмсен уйрăм бригадисене тунă (пĕтĕмпе 6 бригада). Хĕрарăм бригадисенчен 4-шĕ сезон вăхăтĕнчи плансене ирттерсе тултарчĕç. Сăмахран, 1-мĕш бригада плана 114 процент, 3-мĕш бригада 160 процент, 4-мĕш бригада 145 процент тултарнă. Тракторист Н. Порфирьев СХТЗ тракторпа 45 гектар сухалас вырăнне 96 гектар сухаланă. Е. Смелова, А. Иванова, З. Хмельникова трактористсем те унтан юлман, хăйсен планне 135—170 процент таран тултарнă.

Комсомолецсен районĕнĕ 228 агитатор. Вĕсем 1.016 каласу, 64 доклад ирттернĕ, 384 номер боевой листок кăларнă, 980 хутчен хаçатсенчи тĕрлĕрен материалсене вуласа панă. Чылай колхозсенче кăтарту хăмисемпе хисеп хăмисем, хаçат витринисем, куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавсемпе флажоксем тунă.

Ку ĕçе уйрăмах «Марс» колхозра кăтартуллăн йĕркеленĕ. Унта çураки вăхăтĕнче агитаторсем колхозниксене кашни кунах çĕнĕ хаçатсем вуласа панă, фронтри эпизодсем çинчен каласусем ирттернĕ, кун сиктерсе боевой листоксем кăларнă. Колхозра пĕтĕмпе 15—20 номер стена хаçачĕ тухнă. Çамрăксем унта Хисеп хăмипе кăтарту хăми тата хаçат витрини тунă.

Çавăн пекех Крупская, Ленин ячĕпе тăракан тата «Комбайн» колхозсенче те комсомолецсем колхозри ĕçе тивĕçлипе ертсе пыраççĕ.

Пирĕн район июлĕн 5-мĕшĕ тĕлне çураки планне пĕтĕмĕшпех тултарчĕ. Çак ĕçре комсомолецсем хăйсен тивĕçлĕ вырăнне йышăнма тăрăшрĕç.

А. ПАВЛОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Комсомолпа профсоюзăн çуллахи кросĕ вĕçленчĕ

КӲКЕÇ. Июнĕн 11-мĕшĕнче профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросĕ вĕçленчĕ. Кроса пĕтĕмпе 3.065 çын хутшăннă. Вăл шутран 1400-шĕ комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем. Кроса хутшăннисенчен 2991 çын ГТО тата ВГТО нормисене панă.

Кросс Шуркка ялĕнче (комсомол организацин секретарĕ Виноградов) лайăх иртнĕ. Унта кроса комсомолецсем 20 çын, союзра тăман çамрăксем 25 çын хутшăннă. «Чăваш ЦИК» колхозра В. Захарова юлташ граната ывăтассипе лайăх тĕслĕх кăтартнă. Вăл 18 метр ывăтас вырăнне 25 метра çити ывăтнă. Çавăн пекех Альгешри 7 çул вĕренмелли шкулта комсомолец А. Осипов 1000 метра 2 минут та 45 секундра (норма 3 минут та 45 секунд), О. Тихонова 500 метра 1 минут та 40 секундра чупса тухнă. В. Кудряшов гранатăна 37 метра ывăтас вырăнне 46 метра çити ывăтнă.

Ситменлĕхсем çинчен те палăртса хăвармалла. Хăшпĕр комсомол организацийĕсен секретарĕсем çак ĕçе тивĕçлипе ертсе пыман. Сăмахран, Шемшере (комсомол организацин секретарĕ Филиппов) тренировкăллă занятисем ирттерниех лапланса ларнă. Кроса ирттермен те. Ку ĕçре пынă представитель Осоавиахим райсоветĕн председателĕ Васильев юлташ та çакăнпа килĕшнĕ. Кроса ячĕшĕн кăна ирттернĕ фактсем тата ытти колхозсенче те пур. Паллах ĕнтĕ, ВЛКСМ райкомĕ вăхăтра пулăшса пынă пулсан, çав ситменлĕхсем пулман пулĕччĕç.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Икĕ кун хаяр çапăçнă хыççăн Америка çарĕсем Карантан хулине йышăннă. Ку пирĕн икĕ тĕп плацдарм хушшинчи çыхăнăва чылаях çирĕплетет. Тилли секторĕнче тăшман çаплах хытă хирĕç тăрать.

Ытти участоксенче союзниксем пĕр чарăнмасăр çитĕнӳсем туса пыраççĕ, анчах та палăрмаллах малалла куçман. Плацдармсенче пирĕн вăйсем ӳссех пыраççĕ.

Июнĕн 12-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен тата каçхине те пирĕн авиацин пысăк вăйĕсем çĕнĕрен чугун çул объекчĕсене тата тăшманăн транспорчĕпе унăн çарĕсем пĕр çĕре пухăнса тăнă вырăнсене пыра-пыра çапнă. Вăтам бомбардировщиксемпе штурмовиксем тăшманăн фронт линийĕ хыçĕнчи тĕрлĕрен чугун çул пункчĕсене тапăннă.

Çапăçусен районĕнче тăшманăн пĕр тĕле пухăнса тăнă автотранспорчĕпе çарĕсене тата артиллери позицийĕсене атакăланă.

Кан хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри Гимбоск вăрманĕнче пĕр çĕре пухăннă танксем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Çак атакăра боеприпас складне сирпĕнтерсе янă.

Истребительсем Ла-Манш çинче тата çыран тĕлĕнче вĕçсе хуралласа çӳренĕ; аэродромсем çинче тăшман самолечĕсене чылай пĕтерсе тăкнă.

Июнĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ Амьенри, Аррасри, Камбрэри тата Паутьери чугун çул объекчĕсене, çавăн пекех тата Кан хулинчи кĕперсене тапăннă. 23 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман. Вăтам бомбардировщиксемпе штурмовиксем çĕр каçа Сена шывĕ çинчи Катебекри каçăсем çине, Мезидонри чугун çул узелĕ çине тата çав районри шоссе çулĕпе чугун çулсем çинчи ытти объектсем çине бомбăсем пăрахнă. 4 самолет хăйсен базисене таврăнман. Çĕрлехи истребительсем çапăçусен районĕнче тата плацдарм çийĕнче тăшманăн 9 самолетне персе ӳкернĕ».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем пур секторсенче те малалла куçнă, пуринчен ытла Байе хулинчен кăнтăртарахра Серизи вăрманĕпе Тилли-Сюр-Сель хули хушшинче малалла куçнă. Тата икĕ хулана ирĕке кăларнă: сулахай флангра Троарн хулине, Контантен çурутравĕ çинче Ле-Ам хулине. Хальхи вăхăтра тыткăна илнисен шучĕ 10.000 çынтан та иртсе каять.

Июнĕн 12-мĕшĕнче çĕрле тăшманăн катерĕсем пирĕн çулйĕрсем патне сывăхарма хăтланнă. Вĕсене пирĕн патруль суднисем пӳлсе илнĕ те каялла хăваласа янă. Çанталăк начар тăнă пирки сывлăшри наступлени вăйлах пулса пырайман. Çапах та кăнтăрлахи йывăр бомбардировщиксем Парижран кăнтăртарахри аэродромсене тапăннă. Вăтам бомбардировщиксем те активлăн кĕрешнĕ, вĕсем Ренн хулинчи аэродромсене тапăннă.

Июнĕн 13-мĕшĕнче ирхине сыхлари авиаци самолечĕсем Булонь районĕнче торпеда катерĕсене атакăланă, кăшт вăхăт иртсен, çав катерсене ракетнăй установкăллă истребительсем атакăланă. Сахалтан та тăшманăн 3 суднине шыва путарнă, ыттисене вут тивретнĕ е самаях вăйлă сиенленĕ. Разведкăра çӳрекен самолетсем çинчен ӳкерсе илнĕ ӳкерчĕксем çакна палăртнă: июнĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата июнĕн 11-мĕшĕнче йывăр бомбардировщиксем атакăланă Орлеанпа Ренн чугун çул узелĕсене самаях вăйлă сиенленĕ».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Тилли-Сюр-Сель хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн бронетанковăй чаçсем тăшман çарĕсен флангĕ патне пырса тухнă. Тăшмана кăнтăр еннелле питех те ăнăçлăн пырса çапнă. Пирĕн вăйсен малти патрулĕсем, тăшман хаяррăн хирĕç тăрса çапăçать пулсан та, Комон патне çитнĕ ĕнтĕ. Тилли-Сюр-Сельпе Кан хули хушшинчи сектортa çаплах бронетанковăй чаçсем тытăça-тытăça илеççĕ. Тăшман Карантан районĕнче хытă хĕсет.

Ĕнер каçхине, начар çанталăк тăнă пирки пăртак чарăнса тăнă хыççăн, союзниксен авиацийĕ каллех наступлени пуçласа янă, кампани пуçланнăранпа та кун пек вăйлă пырса çапни сахал пулнă. Тăшманăн истребительтнăй авиацийĕ кăшт кăна хирĕç тăнă, анчах та унăн зенитнăй артиллерийĕ вăйлă персе тăнă».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн июнĕн 14-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Тилли-Сюр-Сель районĕнче çаплах танковăй чаçсем çапăçаççĕ. Тăшман тататти-сыпписĕр контратакăсем тăвать, пирĕн çарсем малалла куçнине темĕн пекех чарасшăн хăтланать. Эпир хамăр позицисене çирĕп тытса тăратпăр, тăшманăн вăйсăр вырăнĕсене шыра-шыра тупатпăр. Контантен çурутравĕ çинче тăшман хаяррăн хирĕç тăрса çапăçать. Унăн хаяр контратакисене пула эпир çурçĕрте, Монтебур хули патĕнче, кăштах каялла чакрăмăр. Унтан кăнтăртарахра эпир кăштах малалла куçрăмăр. Тăшманăн Карантан районĕнчи контратакисене сирсе янă».

Пĕлтерӳре малалла çапла каланă: союзниксен сывлăш çар вăйĕсем паян самаях пуçарулла пулнă, вĕсем Брест çурутравĕнчен пуçласа Бельгипе Голланди таран çапăçнă, Хĕвелтухăç Франци ăшнелле инçе кĕрсе кайнă, тăшман вĕсене хирĕç тăманпа пĕрех.

Çурçĕр иртсен часах Англи карапĕсем тăшманăн 7 миннăй тральщикне пӳлсе илнĕ. Çав 7 карапран виççĕшне путарнă, теприне питĕ вăйлă сиенленĕ, вăл нумайччен ишме пултараяс çук ĕнтĕ. Юлашки виçĕ карапран иккĕшĕ чарăннă, вĕсем çинче пушар тухнă.

Союзниксен çарĕсем Баллеруа хулипе Монтебур хулине йышăннă

ЛОНДОН, июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Çар корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 13-мĕшĕнче каç пулса килнĕ тĕлелле союзниксен аллинче тăракан çыранри районăн тăршшĕ 150 километра çитнĕ. Каç пулса килнĕ тĕлелле чи йывăр çапăçусем 48 километр тăршшĕ участокра Вир шывĕн хĕвелтухăçнерехри районра пулнă. Çапăçусенче икĕ енĕн те йышлăн танксем кĕрешеççĕ.

Союзниксен çарĕсем Баллеруа хулине тата Шербур хулинчен 24 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Монтебур хулине йышăннă.

Монтгомери генерал каланă тăрăх, тăшманăн питĕ нумай çын пĕтет.

Германи информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Контатен çурутравĕ çинче Германин армейски корпус командующине Маркс генерала вĕлернĕ.

ЭЙЗЕНХАУЭР ГЕНЕРАЛ ÇАРСЕНЕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕ Эйзенхауэр генерал Франци территорине пырса кĕнĕ салтаксемпе летчиксене тата моряксене паян послани янă. Унта вăл вĕсене çурçĕр Францире пысăк çитĕнӳсем тунăшăн саламланă.

«Пĕр эрне каялла эсир пĕр-пĕрнипе килĕштерсе тунă ĕçсене пула, Европăра пĕрремĕш опорнăй пункт туса хутăмăр, — тенĕ посланире. — Эсир хастарлине, ăстине тата эсир пĕр коллектив пек килĕштерсе çапăçни питĕ усăллă пулнине эпĕ Франци территорине пырса кĕриччен питĕ хытă шанса тăнă, анчах та çак кампанин малтанхи кунĕсенче эсир тунă çитĕнӳсем эпĕ кĕтсе тăнинчен нумай иртсе кайрĕç. Эсир чăн-чăн аслă союзлă коллектив пулса тăратăр, çав коллективра кашни çын пĕрлехи ĕçе хăй нумайтарах пулăшнăшăн питĕ хытă савăнать. Çак йывăр кĕрешӳ хуть те мĕн чухлĕ вăраха кайсан та, ирĕклĕ Франците çĕнĕрен ура çине тăратас ĕçре, Европăри мĕнпур халăхсене тĕнĕл держависем пуç пулса тăнинчен хăтарас ĕçре тата нацистсен çар машинине пĕтерсе тăкас ĕçре хăвăрăн задачăра пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртĕр. Çак аслă ĕç çав тери ăнăçлă пуçланнăшăн эпĕ сире чунтан-чĕререн саламлатăп».

ЧЕХОСЛОВАКИ, БЕЛЬГИ ТАТА ЛЮКСЕМБУРГ ФРАНЦИ КОМИТЕТНЕ ФРАНЦИН ВĂХĂТЛĂХ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂННЕ ХУРСА ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен правительствисем çумĕнчи Франци миссийĕн пичет бюровĕн пĕлтерĕвне панă. Пĕлтерӳре çапла каланă: Бельгин, Люксембургăн тата Чехословаки ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсем хăйсен посланникĕ Морис Дежан патне янă çырăвĕсенче вĕсен правительствисем Франци республикин вăхăтлăх правительствине йышăнни çинчен пĕлтернĕ.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ÇУРÇĔР ФРАНЦИЕ ПЫРСА КĔНИ ÇИНЧЕН СТАЛИН ЮЛТАШ КАЛАНĂ ПИРКИ АНГЛИРЕ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксем Çурçĕр Францие десант антарнине мĕнле хаклатăр эсир тесе «Правда» корреспонденчĕ ыйтнине хирĕç Сталин юлташ панă ответа Англире тухакан хаçатсем пурте пĕрремĕш страницăсенче чи курăнмалли вырăнта пичетленĕ. Çав ответа Лондонри радио та темиçе хутченех панă.

Лондонри радио обозревателĕ Патрик Лейси çапла каланă: Сталинăн хăйĕн талантне тата вăл пĕрлехи тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре совет армийĕсене çав тери ăста ертсе пынине шута илсен, Сталин союзниксен десант антарнă операцийĕсене çавăн пек хак пани уйрăмах паха пулса тăрать. Çакна палăртмалла, тет обозреватель, вырăссем Маршал Сталин ертсе пынипе Германин пысăк вăйĕсене 3 çул хушши чарса тăрса вĕсене ялан поражениесем тӳстермен пулсан, союзниксем Францие çарсем илсе пырса антараймас çукчĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем çаплах наступлени туса пыраççĕ, вĕсем фронтăн Адриатика участокĕнче темиçе тĕлте те Салине шывĕ урлă каçнă. Çулсен паха узелĕ пулса тăракан Пополи пунктне (Кьети хулинчен 30 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, Римпа Пескара çулĕ çинче) туртса илнĕ. Больсен кӳллинчен хĕвелтухăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре те малалла куçнă. Баньореджо районĕнче (Орвието хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) хаяр çапăçусем пынă.

Авиаци çаплах тăшман çарĕсемпе унăн вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Çавăн пекех тата Югослави çыранĕ патĕнчи тăшман суднисем çине тата Корчула çурутравĕ çинчи çулйĕрсем çине бомбăсем пăрахнă.

Иртнĕ çĕр союзниксен авиацийĕн бомбардировщикĕсем Венгрири тăшман объекчĕсене тапăннă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 1.100 вĕçеве яхăн тунă.

ЛОНДОН, июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: фронтăн Адриатика участокĕнче тăшман Пескара шывĕн кăнтăрти çыранне хăварнă. 5-мĕш армин чаçĕсем Римран 120 километр çурçĕртерехри пункта çитнĕ. Тибр шывĕн хĕвелтухăç енчи Риети хулинчен 20 километр хĕвеланăçнерехри Канталупо пунктне туртса илнĕ.

ПАЛЬМИРО ТОЛЬЯТТИ (ЭРКОЛИ) ИТАЛИ ПАТРИОЧĔСЕНЕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

АЛЖИР, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Бари хулинчи радио ĕнер Италин нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчи патриочĕсене Пальмиро Тольятти (Эрколи) восстани тума патриотсене чĕнсе каланине панă. Чĕнӳре çапла каланă:

«Нимĕçсем оккупациленĕ мĕнпур Италийĕпе пĕтĕмĕшле восстани пуçласа ярăр! Çав восстание тăвасси вал — пирĕн хамăр тăван çĕршыв умĕнчи парăм, вăл — хальхи вăхăтра татăклă операцисем тăвакан Англипе США-на пулăшни пулĕччĕ, вăл — виçĕ çул хушши вăрçăн пĕтĕм йывăрлăхне хăй çинче тӳссе тăнă хамăр вырăс тăвансене пулăшни пулĕччĕ», — тенĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

МЮНХЕН ХУЛИНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян союзниксен авиацийĕн бомбардировщикĕсем Инсбрукри (Австри) тата Мюнхенран хĕвеланăçнерехри аэродромсене тапăннă. Иртнĕ каç Англи самолечĕсем Будапешт хулинчен 80 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехри Комарно хулинчи (Венгри) нефть тасатакан завод çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула вăйлă пушарсем тухнă.

ЛОНДОН, июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтернĕ: Англин бомбардировочнăй авиацийĕ Германин çар промышленность центрĕсене каллех вăйлăн тапăнма пуçланă. Июнĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Ланкастер» йышши самолетсен пысăк саединенийĕсем Гельзенкирхенри синтетически горючи завочĕ çине бомбăсем пăрахнă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах Кельн хулине тапăннă. 17 самолет хăйсен базисене таврăнман. Тапăнура пин самолет ытла пулнă. Çавсем пăрахнă бомбăсене пула тапăну районĕнче питĕ вăйлă взрывсем пулнă тата пушарсем тухнă, пушар тĕтĕмĕ 5.000 метр таран çӳлелле явăнса хăпарнă.

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен Вăтаçĕр тинĕс фронтĕнчи çарĕсен штабĕ çумĕнчи специальнăй корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: акăлчансен «галифакс», «либерейтор» тата «виллингтон» йышши бомбардировщикĕсем Италири базăсем çинчен вĕçсе хăпарса Альпы тăвĕсем урлă каçнă та Германин Мюнхен хулине малтанхи хут çĕрле тапăннă.

СОВЕТ ÇАРĔСЕМ КАРЕЛИ ПЕРЕШЕЕКĔНЧЕ НАСТУПЛЕНИ ТУНИ ÇИНЧЕН ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧИ ХАÇАТСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Карели перешеекĕнче наступлени туни çинчен Сталин юлташ панă приказа пур хаçатсем те пĕрремĕш страницăра пичетленĕ. Ĕнер каçхине Британин радио саракан кампанийĕ, çав приказ çинчен пĕлтерес тесе, хăйĕн передачине вăхăтлăха чарса лартнă.

«Ньюс кроникл» хаçатăн редакцийĕ çырнă статьяра çапла каланă: «Мир тăвас тĕлĕшпе çуркунне Мускав сĕннĕ йывăр мар условисене йышăнманшăн финсем часах питĕ хаклă тӳлĕç».

«Дейли экспресс» хаçат çакна палăртать: Хĕрлĕ Çар наступлени тунине пула тăшман линийĕсене татнă. Ку хутĕнче Карели перешеекĕнче пырса çапни кĕтмен çĕртен пулчĕ, унта пырса çапасси пуринчен малтан финсем кĕтмен. «Финсем 1941 çулта йăнăш турĕç. Нимĕçсен вăсалĕсен йăнăшĕсене ун чухне Германи çитĕнӳсем тунипе тӳрре кăларма май пулнă. Анчах кăçалхи çуркунне, Финлянди хăйĕн лайăх условисенче вăрçма пăрахма пултарнă вăхăтра, апла пулмарĕ вара. Халĕ ĕнтĕ Карели перешеекĕнче финн çарĕсем хăйсен руководителĕсен йăнăшĕсемпе суккăрлăхĕн пуçламĕш результачĕсене тӳсеççĕ. Вĕсене халĕ пĕрремĕш хут — пĕрремĕш хут çеç-ха — пырса çапнă, хĕвелтухăç енчен вĕсене ун пек нумай пырса çапĕç-ха».

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Ирхине тухнă хаçатсем Хĕрлĕ Çар Карели перешеекĕнче наступлени туни çинчен анлăн та савăнса пĕлтереççĕ. Америкăри радиостанцисем Карели перешеекĕнче наступлени туни çинчен час-часах пĕлтереççĕ, çав наступлени союзниксен наступленийĕпе çыхăнса тăнине палăртаççĕ. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çакăн пек заголовок панă: «Вырăссем Финляндие хирĕç татăклă поход пуçларĕç». Ытти хаçатсенчи заголовоксем те çавăн пекех.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Ф. М. Ваганов юлташа, урăх ĕçе куçнă май, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Çулйĕр Управлени Начальникĕн обязанноçĕнчен хăтарнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЗОХЕЛЬ.

«Чăваш Коммуни» издательствине хут склачĕн заведующийĕ тата бухгалтер кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, Дом печати, III-й этаж, комната 28. Телефон 0—23.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00187 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф 6 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.